# ЙӖЛМЕ ЙӖЛТӖР ÇУЛӖПЕ

**Муркаш районӗнчи Сăпайкасси ялӗнче çуралса ӳснӗ Юрий Федотов пӗчӗклех спортра пысăк çитӗнӳсем тума ӗмӗтленнӗ. Калайкасси вăтам шкулӗнче вӗреннӗ вăхăтра вăл полиатлон енӗпе палăрнă, яшсем хушшинче республика чемпионӗ ята çӗнсе илнӗ. Шкул пӗтернӗ хыççăн Юрий И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чăваш патшалăх университечӗн строительство факультетӗнче вӗреннӗ, аслă шкулăн чысне тӗрлӗ шайри ăмăртусенче хӳтӗленӗ. Шел пулин те, унăн ӗмӗре кӗске пулнă.**



Йӗлтӗрçӗсен 5-мӗш эстафети 11 сехетре пуçланать. 1-мӗш ушкăнра ăмăртакансем 11 сехет те 3-минутра, 2-мӗш ушкнрисем 12 сехет те 45 минутра, 3-мӗш ушкăнрисем 13 сехет те 30 минутра старта тухаççӗ. Çӗнтерӳçӗсене наградăласси — 14 сехет те 30 минутра пулать. Ăмăртусенче шкулсен тата учительсен командисем хутшăнаççӗ. 1-мӗш ушкăнра шкулсенчи 1991-1992 çулсенче çуралнă вӗренкенсем кӗреççӗ, 2 хӗр ачапа 2 арçын ача пулмалла, хӗр ачасем 2 км, арçын ачасем 3 км чупаççӗ. 2-мӗш ушкăнра — шкулсенчи 1989-1990 çулсенче çуралнă вӗренкенсем, хӗрсем 2 км, арçын ачасем 3 км чупаççӗ.

3-мӗш ушкăнра учительсен командисем старта тухаççӗ. Çӗнтерӳçӗсемпе призерсене кашни ушкăнпах кăтартнă чи лайăх результатсем тăрăх палăртаççӗ.

Çулсем иртеççӗ пулин те, Муркаш тăрăхӗнче Юрий Федотова манмаççӗ. Кашни çулах ăна асăнса республикăри йӗлтӗрçӗсем пӗр-перинпе ăмăртаççӗ. Ăмăртăва йӗркелес ӗçре уйрăмах Юрăн аслă



пиччӗшӗсем Михаил, Валерий тата Александр Федотовсем ытларах вăй хураççӗ.

Республикăри йӗлтӗрçӗсен пӗрремӗш ăмăртăвӗ 2003-мӗш çулта иртнӗ. Ăна пуçаракансен шутӗнче Михал, Валерий, Александр Федотовсем, Николай Никифоров, Юрий Моисеев кӗрешӳ мастерӗ, Михаил Романов спорт мастерӗ, Юрий Федотовăн пӗрремӗш тренерӗ пулнă. Çав çул эстафета-ăмăртăва 21 команда хутшăннă. Кӗçӗннисен ушкăнӗнче Ярапайкассисем пӗрремӗш, Панклисем иккӗмӗш, Кашмашсем вара виççӗмӗш вырăнсене тивӗçнӗ. Вăтаммисемпе аслисен хушшинче чи вăйли Шупашкар хулинчи 42-мӗш шкул пулнă. Çӗнтерӳçӗсен пьедесталӗ çине Муркаш, Шомикпа Ярапайкасси шкулӗнче вӗренекенсем те хăпарнă.

2004-мӗш çулта эстафетăра 31 команда хутшăннă. Чи вăйлисен шутӗнче каллех Шупашкарти 42-мӗш шкул. Çӗнтерӳçӗсенчен муркашсемпе канашсем юлман.

2005-мӗш çулта Юрий Федотов ячӗллӗ эстафета Калайкасси ялӗшӗн пысăк уяв пулса тăнă. Кубоксемпе медальсемшӗн çав тери хӗрӳ кӗрешӳ пулнă. Йывăрлăхсене пăхмасăр çӗнтӗрӳçӗ ята кил хуçисем, Калайкассисем, тивӗçнӗ. Вӗсемех пысăк кубăка çӗнсе илнӗ.

Пысăк ăмăрту йӗркелеме нихăçан та çăмăл мар. Спортсменсене хавхалантарма сумлă парнесем хатӗрлемелле. Калайкассинче иртекен спорт уявне йӗркелесе иртерме «Интурист-Шупашкар» (ертӳçи Валерий Федотов), Çӗнӗ Шупашкарти çăкăр завочӗ (ертӳçи Александр Федотов) тата ытти предприятисемпе усламçăсем пулăшаççӗ.

Пурин те вӗсем пек пуласччӗ.





**ĂМĂРТĂВА ТУХАКАНСЕНЕ ХӖРӲЛЛӖ САЛАМ!**